# Чăваш литературипе искусствин çăлтăрĕ

**Кăçалхи сентябрĕн 25-мĕшĕнче чăваш професси музыкипе драма театрĕн йĕркелӳçи, дирижер, композитор, поэт тата драматург Федор Павлович Павлов çуралнăранпа 120 çул çитрĕ. Вăл Етĕрне уесĕнчи Хусан кĕпĕрнине кĕрекен Патăрьел ялĕнче (халĕ Çĕрпӳ районĕнче) вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Ачаранах пĕлӳ патне туртăннă: ирех вулама вĕреннĕ, 1901 çулхи кĕркунне ăна Патăрьелĕнчи çĕр училищине вĕренме илнĕ. Федор Павлов пĕчĕкренех халăх юрри-кĕввине юратса çитĕннĕ. Ашшĕ те усă сасла пулнă, кĕсле каланă, нумай юрă пĕлнĕ. Унсăр пуçне ял халăхĕнчен те чылай вĕреннĕ.**



1907 çулта Павлов Иккассинчи икĕ класлă училищĕрен вĕренсе тухнă. 1907–1911 çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пĕлӳ илнĕ. Шăпах çакăнта унăн пултарулăхĕ туптаннă та ĕнтĕ. Халăхран юрăсемпе юмахсене, ваттисен сăмахĕсене çырса илнĕ вăл, шкул оркестрне хутшăннă, халăх юррисен пуххине хатĕрленĕ çĕре явăçнă. Унта тăван ен юррисем те кĕнĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулне пĕтерсен Федор Павловича çакăнтах ĕçлеме хăварнă. Вăл ачасене музыка вĕрентнĕ. Ку ĕçре 1913 çулччен тăрăшнă. Çак вăхăтра композитор ĕç-хĕлне аталантарнă, халăх юррисене пухнă. Чăваш шкулĕнчех Константин Васильевич Ивановпа паллашнă. Вĕсем час-часах тĕл пулса искусство çинчен калаçнă.

1913 çулта Федор Павлов Чĕмпĕрти тĕн семинарине вĕренме кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан Хусанти Хĕвел тухăç педагогика институтне çул тытнă. Анчах та ăна пĕтереймен вăл, вĕрентекен пулса ĕçлеме тытăннă. Етĕрне уесĕнчи Палтайри тата Кушлавăшри пуçламăш училищĕсенче вăй хунă.

1917 çултан пуçласа общеcтвăпа политика ĕç-хĕлне хастар хутшăннă. Вăл «Революци искусствăна мĕн пачĕ?», «Совет пропагандин кунĕ» публицистика статйисемпе халăх умне тухса калаçнă, наци искусствин аталанăвĕн çул-йĕрĕ пирки дискуссисене хутшăннă. «Чи малтан тăван халăх юрри-кĕввине, тĕррине, наци йăли-йĕркине сăнлакан сценăна тата ял поэзине тĕпе хумалла», – тенĕ Павлов. 1917 çулта Шупашкар уесĕн пухăвĕнче ăна миравай судья пулма суйланă. Çавна май вăл çемйипе Шупашкар уесĕнчи Шемшер ялне куçса килнĕ. Кунтах драма кружокне йĕркеленĕ. 1919 çулта пирвайхи хут унăн «Судра» комедине лартнă. Вăл ăна ятарласа çак кружок валли çырнă.

1919 çулхи октябрьте Федор Павловича Хусан кĕпĕрнин халăха вĕрентес уйрăм çумĕнчи чăваш секцийĕн искусство инструкторне суйланă, март уйăхĕнче вара – чăваш театр секцийĕн ертӳçине. Кĕске вăхăтрах чылай ĕç тума ĕлкĕрнĕ вăл. Унăн пуçарăвĕпе вулав, халăх çурчĕсем, Çĕрпӳри куçса çӳрекен чăваш театрĕ, Шупашкарти икĕ çул вĕренмелли музыкăпа педагогика, хор тата драма курсĕсем, тĕрлĕ пултарулăх ушкăнĕсем йĕркеленнĕ.

1920 çулта Чăваш автономи облаçне туса хурсан Федор Павлов чăваш наци музыки енĕпе нумай ĕçленĕ. Вăл ертсе пынипе 1920 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче Шупашкарта музыка шкулĕ уçăлнă. Тĕп хулара концерт ĕçне йĕркелес енĕпе те чылай тăрăшнă Федор Павлович: кунтах чăваш наци хорне (халĕ Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕ), чăваш театрĕ çумĕнче концерт ушкăнĕпе салон оркестрне пуçарса янă. 1923 тата 1930 çулсенче вăл ертсе пыракан Чăваш патшалăх хорĕ концертсемпе Мускавра та пĕрре мар пулнă. Çав вăхăтрах Павлов вĕренӳ заведенийĕсенче музыкăна вĕрентнĕ, шкул хорĕсене ертсе пынă, Чăваш патшалăх капеллин дирижерĕнче ĕçленĕ. 1929 çулта вара Шупашкарта музыка техникумĕ (халĕ вăл Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищи) йĕркеленнĕ.

Юлашки кунччченех поэт-композитор музыка енĕпе аслă пĕлӳ илессишĕн çуннă. 1930 çулта вăл Ленинградри консерваторие вĕренме кĕнĕ, Н.А.Римский-Корсаков композитор патĕнче вĕреннĕ М.О.Штейнберг класĕнче пĕлӳ илнĕ. Çĕнĕ вăй-халпа вĕренĕве пуçăннă Федор Павлович. Шел пулин те, унăн пултарулăхĕ йывăр чире пула вăхăтсăр татăлнă. 1931 çулхи çуркунне вăл Сочие сывалма кайнă, анчах та усал чир аталаннăçемĕн аталаннă. Июнĕн 2-мĕшĕнче унăн чĕри тапма чарăннă.

Павлов вун-вун хор произведенийĕн авторĕ шутланать. Юлашки вăхăтра вăл пысăк хорсемпе ĕçленĕ, оркестр валли произведенисем çырнă – «Вперед, Красная Чувашия» марш, симфони оркестрĕ валли «Сăрнайпа Палнай» фантази, музыка комедийĕсемпе симфоньетта. Хор валли çырнă паллăрах произведенийĕсем: "Тӳттĕл", «Сĕрен» «Туй валли», «Красноармейская» тата ыттисем те.

Драматурги енĕпе те палăрнă вăл. Хăйĕн кĕске ĕмĕрĕнче икĕ пьеса çырнă: «Судра» тата «Ялта». Вĕсене хальччченех К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çинче курма пулать.

Федор Павлов 38 çул çеç пурăннă. Çапах та вăл чăваш литературипе искусствин историйĕнче çутă сăнарлă, пултарулла çын пек юлнă. Вăй-халне ĕçре шеллемен. Чăваш ялĕ пуян çеç мар, культура тĕлĕшпе çӳллĕ шайра пултăр тесе тăрăшнă.

**Л.КОЧЕТКОВА,**
**Чăваш Республикин хальхи историйĕн патшалăх архивĕн ертӳçĕ специалисчĕ.**